Ыран – суйлав. Пурте – суйлава!

# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

84 (7401) № ✻ Шăмат кун, 2006 çулхи октябрĕн (юпа) 7-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Хисеплĕ ентешĕмĕрсем! Хаклă суйлавçăсем!

**Ыран – Чăваш Республикин Патшалăх Канашăн депутачĕсен суйлавĕ. Пирĕншĕн пуриншĕн те яваплă кун вăл. Çак кун эпир республика парламентне, урăхла каласан, саккун кăларакан органа суйлатпăр. Пирĕн малашнехи пурнăç мĕнле пуласси шăпах эпир çак суйлава хутшăннинчен, хамăр сасса камсемшĕн панинчен нумай килет.**

**Кăçалхи суйлавăн уйрăмлăхĕ вăл – парти списокĕпе тата пĕр мандатлă округсемпе иртни. Суйламалăх пур. Шутламалăх та.**

**Пилĕк партирен пĕрне суйланă чухне таранăн шухăшласчĕ. Суйлав кампанийĕ вăхатĕнче тем те пĕр тума шантаракансемшĕн сасăламалла е чăннипех те паян халăх пурнăçне лайăхлатассипе ĕçлекен партишĕн памалла сасса? Çавăнпа та хамăра хамăр çак ыйтăва пани паян вырăнлă пулĕ: çак парти паян ман пурнăçа, район, республика пурнăçне лайăхлатассишĕн, çăмăллатассишĕн мĕн тунă-ха? Хуравне вара тĕслĕхсемпе çирĕплетме тăрăшăр. Çакă сире тĕрĕс утăм тума пулăшĕ, мĕншĕн тесен паян ял çыннин пурнăçĕ хăш парти тăрăшнипе ырă енне улшăннине эсир хăвăрах пĕлетĕр. Тепĕр хушма ыйту та пама пултаратăр хăвăра: суйлав кампанийĕ вăхăтĕнче пире çăмăллăхсем пама шантаракан партисем халиччен ăçта пулнă? Мĕншĕн пирĕн пурнăçа çăмăллатас тесе вĕсем паян шантаракан шухăшĕсенчен пĕрне те пурнăçламарĕç халиччен?**

**Пĕр мандатлă округпа депутат мандачĕшĕн çиччĕн тухрĕç кĕрешĕве. Вĕсенчен пĕрне, чи тивĕçлине, суйламалла пирĕн. Суйлав кампанийĕ вăхăтĕнче эсир çакна асăрхарăр пулĕ: вĕсенчен хăшĕ-пĕри эрехсăра ĕçтерсе, укçа парса, тем тĕрлĕ суя агитаци материалĕсемпе илесшĕн халăх шанăçне. Çапла майпа суйлавçăсене хăйсен енне çавăрасшăн. Вĕсем çумĕнче криминаллă элементсем те çук мар. Халех саккуна сĕмсĕррĕн пăсаççĕ пулсан, кайран мĕнлерех саккунсем йышăнĕç вĕсем?**

**Çавăнпа та Патшалăх Канашĕнче халăх шухăш-кăмăлне ăнланакан, унăн чун ыратăвне курса-туйса тăракан çынсем пулмалла. Суйлавçăсен шухăшне влаç илтмелле калама пултартăр вăл, халăха майлă саккунсем кăларма пулăштăр вăл. Кунта вара пурнăç опычĕ те кирлĕ, халăх хисепĕ те, шанăçĕ те. Эсир сассăра паракан кандидат паянччен пирĕн пурнăçа лайăхлатассишĕн мĕн тунине куç умне кăларăр. Шăп çав конкретлă ĕçсем пире ăна шанма май памалла та. Çакăн пек кандидатшăн парасчĕ хамăрăн сасса.**

**Тата çакăн пирки те аса илтерес килет. Суйлава хутшăнасси – гражданинăн Конституципе пăхнă прави, çавăнпа пĕрлех гражданла тивĕçĕ те. Пире хамăрăн пурнăçа йĕркелеме пана ирĕк вăл. Çавăнпа та ыран пурин те Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсен суйлавне хутшăнасчĕ. Хамăрăн пурнăç малашлăхĕшĕн, лайăх пуласлăхшăн сасăсене парасчĕ.**

**Хисеплĕ суйлавçăсем! Раççей Президенчĕ В.В. Путин пĕтĕм çĕршыв пĕрлĕхлĕ пултăр тесе тимлет, пирĕн республикăн ертӳçи Н.В. Федоров Чăваш Ен пуян та вăйлă аталантăр тесе тăрăшать. Çак ĕçре пирĕн пулăшу вĕсене паян питĕ кирлĕ. Пурте пĕр тĕллевлĕн вăй хурсан, пĕр шухăшлăн пурăнсан çеç çĕршывра йĕркелĕх, килĕшӳ пулĕ, республикăмăр, çĕршывăмăр малалла сулмаклă утăмсем тăвĕ, пирĕн пурнăç татах та лайăхланĕ. Ахальтен каламаççĕ вĕт пĕрлĕхре – вăй, тесе. Эсир, паянхи лару-тăрăва тĕрĕс хак парса, суйлавра, хисеплĕ ентешĕмĕрсем, тĕрĕс утăм тăвасса шанас килет.**

**Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

## Ыран – Ял хуçалăхпе продукци тирпейлекен промышленноçра ĕçлекенсен кунĕ

### ХИСЕПЛĔ ЯЛ ÇЫННИСЕМ, АГРОПРОМЫШЛЕННОÇ КОМПЛЕКСĔН ĔÇЧЕНĔСЕМ!

Сире профессилле уявпа – Ял хуçалăхпе продукци тирпейлекен промышленноçра ĕçлекенсен кунĕ ячĕпе саламлатăп.

Агропромышленноç комплексĕ – Чăваш Ен экономикин питех те пĕлтерĕшлĕ пайĕ.

Эсир ырми-канми вăй хунăран республикăра пурăнакансене экологи енчен таса апат-çимĕçпе тивĕçтернĕ. Çанталăкăн кăткăс условийĕсене пăхмасăр, кăçал пысăк тухăçлă ял хуçалăх культурисене туса илнĕ. Выльăх-чĕрлĕх, чăх-чĕп ӳстерессинче ырă улшăнусем пулса иртеççĕ.

Ял хуçалăхне пулăшса пырасси яланах пирĕн политикăн тĕп çул-йĕрĕсенчен пĕри пулнă. “АПК-на аталантарасси” приоритетлă наци проектне пурнăçа кĕртни чăваш ялĕсене миллиардшар тенкĕ илсе килчĕ. Республикăра çĕнĕ выльăх-чĕрлĕх комплексĕсен никĕсĕсене хываççĕ, ĕçлекеннисене юсаса çĕнетеççĕ. Хресченсемпе фермерсем ял хуçалăх производствине аталантарма пысăк çăмăллăхсемлĕ кредитсем илеççĕ. Çамрăк специалистсем валли çурт-йĕр активлă тăватпăр.

Республикăра обществăлла инфраструктурăна аталантарасси çине пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Ял çыннисем хуларисем пекех хăтлă условисенче пурăнма тивĕçлĕ. Çемье врачĕн офисĕсем, тĕслĕх библиотекăсем, вĕрентӳпе культура центрĕсем паянхи ял пурнăçне çĕнетме май параççĕ. Çитес икĕ çулта пирĕн историлле задачăна – мĕн пур ялсене хăпартнă автоçулсемпе çыхăнтарассине вĕçлемелле – татса памалла. Ялсенче пĕтĕмпе 9 миллиард тенкĕлĕх 1100 километр çул тумалла.

Ял ĕçченĕсем, ырми-канми вăй хунăшăн, хресчен тивĕçне параннăшăн сирĕн умăрта пуçа таятăп. Çирĕп Чăваш Енĕшĕн тата пĕрлĕхлĕ Раççейшĕн ĕçлеме ăнăçу сунатăп. Çирĕп сывлăхлă пулăр, тулăх пурнăç, ырăлăхпа телей сунатăп!

**Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. ФЕДОРОВ.**

### ХИСЕПЛĔ ЯЛ ĔÇЧЕНĔСЕМ!

Сире пурне те Ял хуçалăхпе продукци тирпейлекен промышленноçра ĕçлекенсен професси кунĕпе тата çывхарса килекен Тыр-пул уявĕпе ăшшăн саламлатăп.

Çĕр – пирĕн пуянлăх, пире тăрантараканĕ. Вăл хăйне юратакансене яланах пысăк тухăçпа савăнтарать. Кăçал çанталăк условийĕсем çĕр ĕçченĕ майлах пулмарĕç пулин те, акса-лартса хăварнă ял хуçалăх культурисене пухса кĕртес тесе хăвăртан килнине йăлтах тăватăр. Çăмăл мар условисенчех тыр-пула пĕтĕмĕшле пухса кĕртнĕпе пĕрех. Çĕр улми анисем çинче те ĕç вĕçленсе пырать. Унăн тухăçĕ иртнĕ çулхинчен пысăк пулни савăнтарать. Пахча çимĕçпе тымар çимĕçе те уйран йĕркеллĕ пуçтарса кĕртес тесе тимлетĕр.

Выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туса илессипе те район малаллах каять. Аш, сĕт иртнĕ çулхинчен ытларах туса илтĕмĕр. Сыснасен йышĕ кăçал пăлармаллах ӳсрĕ, пĕчĕккĕн пулин те, ĕне выльăхсен йышне те хăпартса пыратпăр. Йăлтах çакă сирĕн тăрăшулăхăрпа çыхăннă. Тавах сире ырми-канми ĕçĕршĕн, хăвăрăн тивĕçĕре чунчĕре хушнă пек пурнăçланăшăн.

Кĕçех Пукрав та çитет. Умра – сивĕ хĕл кунĕсем. Продукци туса илес, выльăх-чĕрлĕхе ăнăçлă хĕл каçарас тĕлĕшпе эсир малашне те хăвăртан мĕн килнине тăвасса шанатăп. Ял ĕçченĕ халиччен те нимĕнле йывăрлăхран та хăраман. Вĕсене эсир малалла та çĕнтерсех пырăр.

Пурне те сире çăмăл мар, анчах пархатарлă ĕçĕршĕн чĕререн тав тăватăп, çирĕп сывлăх сунатăп, çемйĕрсенче килĕшӳпе тату пурнăç пултăр.

**Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

## Ĕç çи – 2006

### РАЙОНТИ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ КĔРХИ УЙ-ХИР ĔÇĔСЕМ ОКТЯБРĔН 6-МĔШĔ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТНИ

***Цифрăсен колонкисенче: 1. Çĕр улми кăларса пухнă. 2. Кĕрхи культурăсем акнă (процентпа). 3. Çĕртме сухи тунă (гектарпа).***

| | 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 80 | 39 | 430 |
| “Волга” | 100 | 94 | 90 |
| “Восток» | 100 | 129 | 290 |
| «Герой” | 100 | 62 | 360 |
| ЗАО “Агро-Урожай” | 100 | 0 | |
| К. Иванов яч. хис. | 84 | 72 | 80 |
| Ильич яч. хис. | 93 | 77 | 210 |
| “Колос” | 0 | | |
| Ленин яч. хис. | 84 | 87 | 585 |
| ООО АФ “Лидер” | 75 | 0 | 60 |
| “Нива” | 28 | 10 | |
| “Оринино” | 100 | 58 | 520 |
| “Передовик” | 59 | 45 | 95 |
| “Свобода” | 93 | 97 | 440 |
| “Сеятель” | 172 | 160 | |
| Суворов яч. хис. | 92 | 76 | |
| ООО АФ “Рассвет” | | 140 | 430 |
| ОАО АФ “Нива” | 70 | 70 | |
| “Ударник” | 85 | 120 | 760 |
| “Хлебороб” | 32 | | |
| Чапаев яч. хис. | 100 | 110 | 130 |
| «Чемеево» | 83 | 86 | 45 |
| Чкалов яч. хис. | 140 | 130 | |
| **Районĕпе** | **90** | **74** | **5035** |

Çанталăк йĕпе-сапаллă тăнине пула районти хуçалăхсенче кĕрхи уй-хир ĕçĕсем йывăррăн пыраççĕ. Пĕтĕмĕшле илсен, ĕнерхи кун тĕлне тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсене 16636 гектар çинчен (планпа 16964 гектар) пухса кĕртнĕ. Пухса кĕртмен лаптăксем Е. Андреев яч. хис., «Колос», Ленин яч. хис. хуçалăхсенче, «Лидер» тата «Нива» агрофирмăсенче пур.

Пĕтĕмпе 27539 тонна тырă çапса тĕшĕленĕ (иртнĕ çул 32714 тонна). Вăтам тухăç гектар пуçне 16,6 центнерпа (иртнĕ çул 19,9 центнер) танлашать.

Улăма 13500 гектар çинчен (вырса çапнин 81 процентĕ) пухса тирпейленĕ. Пуçтарса тирпейлемен улăм «Колос», «Передовик», «Чемеево» хуçалăхсен, «Лидер», «Рассвет» агрофирмăсен хирĕсенче уйрăмах чылай.

Çĕр улмине 1229 гектар çинчен (планпа 1365 гектар) кăларса пухнă. 6 хуçалăхра ку ĕçе вĕçленĕ. Гектар пуçне тухакан вăтам тухăç çак вăхăта 153 центнерпа танлашать.

Пахча çимĕç кăçал 136 гектар йышăнать. Ĕнерхи кун тĕлне вĕсене 12 гектар çинчен пуçтарса кĕртнĕ (8 процент). Ку ĕçе «Восток», «Герой», «Агро-Урожай», Чкалов яч. хис. хуçалăхсенче вĕçленĕ.

Тымар çимĕçсене 330,6 гектар çинчен кăларса пухмалла пулсан, 50 гектар çинчен (15 процент) пухса илнĕ. Çак ĕçе «Волга», «Восток», Ильич яч. хис., Суворов яч. хис., «Хлебороб» хуçалăхсенче тытăннă, «Оринино» тата Чкалов яч. хис. хуçалăхсенче вĕçленĕ.

Кĕрхи культурăсене 3720 гектар çинче акса хăварса кĕр аки планне (5050 гектар) 74 процент тултарнă. «Агро-Урожай», «Колос» хуçалăхсенче, «Лидер» агрофирмăра кĕрхи культурăсене пачах акман.

Ĕнерхи куна кĕрхи çĕртме сухи тунă çĕрте районĕпе 40 трактор ĕçленĕ, пĕтĕмпе 5035 гектар çĕртме сухаланă.

Чăваш Республикин Президенчĕн Указĕ

## 2007 çулта Республика Кунне ирттересси çинчен

Чăваш Республикин “Чăваш Республикин патшалăх уявĕ çинчен” саккунĕпе килĕшӳллĕн, Чăваш Республикин муниципаллă пĕрлĕхсен социаллă пурнăçпа экономика аталанăвне малалла хавхалантарас тĕллевпе **çапла йышăнатăп:**

1. 2007 çулта Республика Кунне уявлас енĕпе ирттерекен тĕп мероприятисене Шупашкар хулинче тата Чăваш Республикин муниципаллă пĕрлĕхĕсем Республика Кунне уявланă шайра хăйсен территорийĕсенче мероприятисем пурнăçлама право çĕнсе илес енĕпе ирттерекен конкурсра (малалла – конкурс) çĕнтернĕ Куславкка районĕнче ирттерме хатĕрленес тата ирттерес.

2. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн:

2007 çулта Республика Кунне хатĕрленес тата ирттерес енĕпе пурнăçламалли мероприятисен планне хатĕрлемелле тата çирĕплетмелле, унта нумай отрасль хутшăннипе регионсен хушшинчи выставка, социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн ыйтăвĕсемпе конференцисем, çавăн пекех федерацин ĕç тăвакан влаç органĕсемпе пĕрле Пĕтĕм Раççейри халăх пултарулăхĕн “Раççей çăл куçĕсем” XV фестивальне тата Пĕтĕм Раççейри декораци прикладной искусство ăстисен “Раççей ăстисем” V конкурсне ирттерме палăртмалла;

конкурс условийĕсемпе килĕшӳллĕн Куславкка район администрацине общество инфраструктурине аталантарма укçа уйăрса памалла.

3. Чăваш Республикин вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене 2007 çулта йăлана кĕнĕ “Акатуй” уявĕсем тата Республика Кунне халалласа ытти культура тата спорт мероприятийĕсем ирттерме сĕнес.

4. Çак Указ ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

**Чăваш Республикин Президенчĕ Н. ФЕДОРОВ.**

Шупашкар, 2006, юпа, 5, 83 №.

**Октябрĕн 8-мĕшĕнче – ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсен суйлавĕ**

## Суйлав пĕрлешĕвĕсемпе, кандидатсемпе тепĕр хут паллаштаратпăр

Ыран эпир ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсене суйлатпăр. Çĕнĕ парламентра пĕтĕмпе 44 депутат пулать.

22 депутата пĕрлехи округпа (Чăваш Республики пĕр округ шутланать) суйлав пĕрлешĕвĕсен списокĕсемпе суйлатпăр. **(Суйлав пĕрлешĕвĕсен списокĕпе 2-мĕш страницăра паллашăр.)**

Тепĕр 22 депутатне пĕрер мандатлă округсенчен суйлатпăр. (Ку хутĕнче Чăваш Республикине 22 округ çине пайланă.) Пирĕн Муркаш округĕ 8-мĕш номерлĕ округ шутланать. Кунта Элĕк районĕ те кĕрет. Пирĕн Элĕксемпе пĕр депутат суйламалла. Кандидачĕсем вара 7-ĕн. **(Кандидатсен пурнăç çулĕпе тата тупăшĕ, пурлăхĕ çинчен каланипе 2-мĕш страницăра паллашăр.)**

**Вырăнти суйлав**

## Хушма суйлавсем пирки

Ыран Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсене суйлатпăр. Кунпа пĕрлех çакна аса илтеретпĕр: çак кунах пĕр мандатлă **16 № Очăкасси** суйлав округĕпе (унта Çатракасси ял тăрăхĕнчи Очăкасси, Çĕньял Очăкасси, Йĕрĕхкасси, Шупуç, Торинкасси, Ятман, Йӳтĕркасси, Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи Вăрăмой, Шуркасси, Çĕньял Шурча ялĕсем кĕреççĕ) депутатсен районти Пухăвĕн депутатне, **Ильинка ял тăрăхĕпе** (11 № Вăрманкасси округĕ) тата **Ярославка ял тăрăхĕпе** (1 № Центральнăй тата 3 № Яргейкин округĕсем) депутатсен ял тăрăхĕсен Пухăвĕсен депутачĕсене суйламалла пулать.

Пĕр мандатлă 16 № Очăкасси суйлав округĕпе депутатсен районти Пухăвĕн депутатне суйлама кандидата «Ударник» хуçалăх ертӳçине П.П. Давыдова тата «Шупашкарти агрегат завочĕ» уçă акционер обществин хăрушсăрлăх службин хурал пайĕн контролерне Г.М. Пыркина кандидата тăратнă.

Депутатсен ял тăрăхĕсен Пухăвĕсен депутачĕсене суйлама Ильинка ял тăрăхĕнчи 11 № Вăрманкасси округĕпе А.А. Антонова тата П.П. Кошкинана, Ярославка ял тăрăхĕнчи 1 № Центральнăй округпа В.В. Петровпа Л.Н. Сорокинана, 3 № Яргейкин округĕпе А.А. Гришинана тата А.П. Иванова кандидата тăратнă.

**Çырăнтару-2007**

**Çитес çул илсе тăма**

***Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2007 çулхи пĕрремĕш çур çулта илсе тăма çырăнтараççĕ. 6 уйăха çырăнмалли хак – 148 тенкĕ те 26 пус.***

***Хаçата вăхăтра çырăнса илме тăрăшăр.***

**Район хаçачĕн редакцийĕ.**